26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАРТ
17
ЮНКУН
60(6297) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВĂРМАН ХАТĔРЛЕВĔН ОТВЕТЛĂ ТАПХĂРĔ

Вăрман хатĕрлевĕн питех те ответлă тапхăрĕ иртсе пырать. Республикăри вăрман хатĕрлекен предприятисем шывшур пуçланиччен юлнă вăхăтăн кашни сехечĕпе туллин усă курассишĕн, вăрман касса хатĕрлесе турттармалли плана тултарассишĕн çине тăрса кĕрешеççĕ.

Мартăн 1-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче вăрман хатĕрлевĕнче фронтри пек ĕçлемелли икэрнелĕх иртрĕ. Икэрнелĕх сезонри плана пурнăçлас ĕçре, уйрăмах чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе турттарас ĕçре, пăлă вырăн йышăнса тăчĕ. Вăрнарпа Канаш леспромхозĕсем, Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрман пункчĕ çак икэрнелĕхре чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе турттарас ĕçе чылай хăвăрт туса пычĕç. Вăрнар леспромхозĕ (директорĕ Сазанов юлташ) мартăн 14-мĕшĕ тĕлне транспорт валли вутă хатĕрлесе турттармалли çурçулти плана хатĕрлес енĕпе 106,4 процент, турттарас енĕпе 107,1 процент тултарчĕ.

Анчах чылай леспромхозсем, механизациленĕ вăрман пункчĕсем тата районсемпе колхозсем фронтовой икэрнелĕх вăхăтĕнче те вăрман хатĕрлес ĕçе кирлĕ пек хăвăртлăхпа туса пыраймарĕç.

Кирери механизациленĕ вăрман пункчĕ, Шăмăршă, Улатăр тата Алтышево леспромхозĕсем чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе турттармалли плана пурнăçлас тĕлĕшпе питех те сўрĕк ĕçлеççĕ. Мартăн 14-мĕшĕ тĕлне Шăмăршăпа Улатăр леспромхозĕсем тата Кирери механизациленĕ вăрман пункчĕ чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли плана 52 процента яхăн çеç пурнăçланă, турттарас енĕпе те планăн виçĕ пайĕнчен икĕ пайне те тултарайман.

Республика чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли сезонри плана мартăн 14-мĕшĕ тĕлне хатĕрлес енĕпе 73,5 процент, турттарас енĕпе 66,8 процент çеç тултарма ĕлкĕрчĕ.

Чăваш АССР Вăрман Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсем кĕркуннехипе хĕллехи сезонра вăрман касса хатĕрлемелли плана мартăн 10-мĕшĕ тĕлне 69 процент ытларах çеç тултарнă. Вăрман хатĕрлемелли плана тултарас тĕлĕшпе Буинск леспромхозĕ (директорĕ Васильев юлташ) хатĕрлес енĕпе те, турттарас енĕпе те республикăра пĕрремĕш вырăн йышăнать. Ун хыççăн Канаш тата Вăрнар леспромхозĕсем пыраççĕ. Анчах çак леспромхозсен те вăрман хатĕрлевĕн хăвăртлăхне нумай ўстермелле-ха.

Вăрман хатĕрлевĕн ăнăçлăхне вăрманта ĕçлекенсен ĕç тухăçлăхĕ, районсемпе колхозсем вăрман хатĕрлекен организацисене ĕç тата туртăм вăйĕ çителĕклĕ парса тăни тата вĕсене вăрманта йĕркеллĕ ĕçлеттерни татса парать. Халĕ çакăн çине уйрăмах вăйлăн çавăрăнса пăхмалла, анчах çакă халĕ çук-ха. ЧАССР Наркомлесĕн предприятийĕсенче планпа кулленех хатĕрлекенсем 7.115 çын, турттаракансем 5.990 çын ĕçлемелле. Анчах çакăн чухлĕ ĕç вăйĕ тата туртăм вăйĕ вăрманта нихăçан та пулман-ха. Мартăн 14-мĕшĕнче, сăмахран, вăрманта хатĕрлекенсем 6.256 çын, турттаракансем 3.997 çын çеç ĕçлеççĕ. Районсемпе колхозсем хăйсен çыннисене вăрманта йĕркеллĕн ĕçлеттерессишĕн, вĕсене пурнăçпа йăла условийĕсем туса парассишĕн кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Леспродторгсем те ку ĕçри ответлăха хăйсем çинчен сирме тăрăшаççĕ.

Ĕçпе туртăм вăйĕ йĕркеллĕ парса тăрасси çине уйрăмах Шăмăршă, Кувакино, Пăрачкав, Тăвай районĕсен тата унти колхозсен руководителĕсен тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Тăвай районĕ чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли плана 39,7 процент, турттармалли плана 29.8 процент çеç тултарнă.

Вăрман хатĕрлекен предприятисен, районсемпе колхозсен тата Чăваш АССР Наркомлесĕн çакна асра тытмалла: республикăра вутă тата вăрман материалĕсене турттарас ĕç хатĕрлессинчен чылай юлса пырать-ха. Çавăнпа шывшур пуçланиччен, çуна çулĕпе туллин усă курса, вăрманти мĕнпур вутăпа йывăçа складсене турттарса тухмалла. Ирхи тата каçхи шăнтнă вăхăтсем — ĕçе кайма тухмалли вăхăтсем мар, вăрмантан вутă е йывăç материалĕсем турттарса тухмалли вăхăтсем пулса тăмалла.

Республикăри вăрман хатĕрлекен предприятисен, районсемпе колхозсен руководителĕсен, вăрман хатĕрлевĕн ответлă тапхăрне организованно ирттерессишĕн кĕрешмелле.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 15-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 15-мĕшĕнче пирĕн войскăсем нумай кунсем хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн командовани приказĕ тăрăх Харьков хулине эвакуациленĕ.

Смоленск облаçĕнче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса Холм-Жирковский хулине йышăнса илнĕ.

Ытти фронтсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Мартăн 14-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чăсĕсем войскăсемпе грузсем тиенĕ 100 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 9 батарейине тата миноментсен 7 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 8 складне сирпĕнтерсе янă. Керчь проливĕнче тăшманăн 3 катерне тата 3 баржине путарнă.

* * *

Вязьмăран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă. Холм-Жирковский районĕнче малтанах хатĕрлесе хунă оборона рубежĕ çине таянса пырса, тăшман артиллерирен персе тăрса тата пехотăпа танксен вăйĕпе контратакăсем туса пирĕн войскăсене малалла кайма чарасшăн пулнă. Пирĕн чаçсем хаяррăн çапăçнă хыççăн нимĕçсене оборонăн çав позицийĕсенчен хĕссе кăларнă та Холм-Жирковский хулине йышăнса илнĕ.

Вязьмăран хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене нумай пĕтернĕ, трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса халăх пурăнакан 40 пункта, вăл шутра Батулино ятлă район центрне йышăнса илнĕ. Тытса илнĕ трофейăсене шута илеççĕ. Пĕр участокра тăшман контратака тума хăтланса пăхнă, анчах çапăçу хирĕнче 200 виле хăварса каялла чакнă.

* * *

Северный Донецăн вăтам районĕнче пирĕн войскăсем тăшманпа хаяррăн çапăçнă. Меллĕ позицисене йышăнса илес тесе, нимĕçсем наступление пехотăн пысăк вăйĕсене тата 18 танк янă. Пĕр чаçăн подразделенийĕсем противотанковăй орудисенчен персе тăрса нимĕçсен çапăçу йĕркине аркатнă, 11 танк пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсем çĕре чаканса выртма хăтланнă, анчах пирĕн боецсем пыра-пыра çапнипе вĕсен каялла чакмалла пулнă. Çапăçу хирĕнче 300 çити тăшман вилли выртса юлнă.

* * *

Ильмень кӳллинчен кăнтăртарахра пирĕн чаçсем нимĕçсен вăйлă тĕреклетнĕ оборона узелне аркатса тăкнă та пĕр юханшыв урлă каçнă. Пысăк çухатусем тунă хыççăн, тăшман аманнисемпе хĕçпăшала пăрахса каялла чакнă.

Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 8 самолетне персе ўкернĕ. Кунсăр пуçне пĕр кун хушшинче зенитнăй артиллерипе пехота хĕçпăшалĕнчен персе тăрса тăшманăн 12 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Минск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр уйăх хушшинче нимĕçсен 15 çар эшелонне ўпĕнтерсе янă. 9 паровоз тата 212 вагон арканса кайнă. Ишĕлнĕ вагонсем айĕнче нимĕçсен нумай салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ. Чугунçул станцийĕсене пыра-пыра тапăннă вăхăтра партизансем автомашинăсем тиенĕ 10 платформана сирпĕтсе янă тата 6 бензин цистернине çунтарса янă.

* * *

Аяларахра Ленинград фронтĕнче вĕлернĕ полици дивизийĕн лейтенанчĕ Вальтер Геллер дневникĕнчен илнĕ вырăнсене пичетлетпĕр:

«**1942 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕ.** Ерипенех Германишĕн вăрçă юлашки вăя пухса çапăçакан кĕрешӳ пек пулса пырать... Ĕлĕк эпир тăван çĕршыва тавăрăнас шанчăк пуррипе çапăçаттăмăр. Халĕ ĕнтĕ киле тĕрĕс-тĕкĕл тавăрăнасс çине кам шанма пултарать-ха? Çĕнтерӳ çине шанма питĕ сахал, вăл пуçĕпех те çук-и тен.

Декабрĕн 31-мĕшĕ. Çĕнĕ çул майĕпе епле те пулин шанчăк пур-ши пирĕн? Вăраха тăсăлнă вăрçă пирки эпир çав тери усал та тискер.

Январĕн 21-мĕшĕ. Дивизи калама çук пысăк çухатусем тӳсет. Пирĕн полкра офицерсем пурте тенĕ пек вилсе пĕтрĕç. Хăрушлăх пысăк. Аркатса тăкнă подразделенисен юлашкийĕсене ытти чаçсемпе пĕрлештернĕ. Ыттисене хупăрласа илнĕ пулмалла... Ку ĕнтĕ, паллах, питĕ йывăр кризис. Ăна юсама май та пулас çук».

* * *

Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакакан нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем мирлĕ халăха çав тери тискеррĕн асаплантараççĕ. Смоленск облаçĕнчи Суходол ялĕнче фашистла ирсĕрсем çынсен пĕр ушкăнне пĕр пўрте хупса хунă. Гитлерла палачсем хĕрарăмсенчен мăшкăлланă та çуртне вут хыптарнă. Вутра И. Комушкина хăйĕн кăкăр ĕмекен ачипе пĕрле, Евдокия Котова, Екатерина Фрунтова тата ыттисем те çунса кайнă. Мĕнпурĕ 24 çын пĕтнĕ, вĕсем хушшинче 8 ача пулнă.

Фронтовиксен çырăвĕсем

1. ШАРОВ ЮЛТАШĂН ПАТТĂР ĔÇĔ

Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн Совет Союзĕнчи пур халăхсен ывăлĕсем те паттăррăн çапăçаççĕ. Çавăн пекех чăваш халăхĕн ывăлĕсем те ылханлă тăшмана хирĕç кĕрешнĕ çĕрте хăйсен геройлăхне кăтартаççĕ.

Кунта эпир чăваш ачи Григорий Филиппович Шаров юлташ çинчен каласа парасшăн. Вăл Сĕнтĕр районĕнчи Пушкăрт ялĕнчен. Старшина Шаров хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле Совет Çурçĕрне хўтĕлет.

Шаров сержанта боецсен пысăк мар ушкăнĕпе пĕрле питех те кирлĕ чугунçулăн пĕр участокне хўтĕлеме задани панă. Ăна кунта нимĕçсен пысăк ушкăнĕ çавăрса илет. Анчах Шаров юлташ çухалса каймасть, вăл хăй командир иккенне манмасть. Тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçса, гитлеровецсене пысăк çухату кўрсе, Шаров юлташ ертсе пыракан боецсем тăшманăн ункине ăнăçлăнах татса тухаççĕ. Вĕсен пĕр çын та çухалмасть. Паттăр боецсем, Çурçĕрти сĕм вăрман витĕр талăкра 36 çухрăмлă марш туса, хамăрăн чаçсемпе пĕрле пĕрлешеççĕ.

Пĕр вырăнта гитлеровецсем наступлени тума хатĕрленнĕ. Вĕсен наступленине чарса лартмалла. Çакна тума чи малтан пысăк шыв урлă каçакан кĕпере сирпĕнтермелле. Анчах нимĕçсем пулеметсенчен тăвăллăн персе тăнипе кĕпер патне пыма ниепле те май çук. Шаров юлташ, нимĕнле вут-çулăма пăхса тăмасăр кĕпер патне канав тăрăх шуса пырать те, çав кĕпере сирпĕнтерсе ярать. Тăшман пирĕн кĕперпе усă кураймасть. Анчах çапах та фашистсем наступлени тăвас шухăша пăрахмаççĕ. Вĕсем шыв урлă пĕр тĕлте каçă тума тытăнаççĕ. Пирĕн подразделени çав вырăн патнелле контрнаступление каять. Шаров юлташ татах малти ретре.

— Тăван çĕршывшăн, Сталиншăн! — тесе, «урра» кăшкăрса вăл хăйĕн мĕнпур юлташĕсене хавхалантарса малалла ыткăнать.

Старши сержант **И. Голубев.**

2. ЭПĔ 53 НИМĔÇЕ ВĔЛЕРТĔМ

Эпĕ Элĕк районĕнчи Урмай ялĕнче çуралса ўснĕ. Тăван çĕршыв мана çирĕплĕхпе хастарлăх тата паха хĕçпăшал пачĕ. Хамăрăн тăван çĕршывшăн, тăван республикăшăн эпĕ тăшмана хирĕç пĕтĕм вăя хурса кĕрешетĕп. Эпĕ — снайпер. Вăрçа кĕнĕренпе ĕнтĕ 53 нимĕçе вĕлертĕм. Çапăçу хирĕнче икĕ хутчен амантăм. Халь госпитальре выртатăп. Хăвăртрах сывалса тухса татах çапăçу хирне кайма, хамăн шута малалла ўстерсе пыма, гитлеровецсене татах та ытларах вĕлерме ĕмĕтленетĕп.

Ефрейтор **В. Романов.**

3. ЧĂВАШ ЮРРИСЕМ ХАВХАЛАНТАРЧĔÇ

Февралĕн юлашки кунĕсенче чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕн фронтовой бригади пирĕн чаçра концертсем пачĕ. Бригадăна ансамблĕн художествăллă руководителĕ çамрăк композитор Ф. Лукин юлташ ертсе пырать. Боецсем, вырăссем те, чăвашсем те, ытти халăхсен представителĕсем те, пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Чăваш халăхĕн юррисемпе ташшисем боецсене питех те кăмăла кайрĕç. Çавăн пекех ансамбль вырăсла юрăсене те ăста юрласа пачĕ.

П. Романов.

Фронтовиксен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăх

Фронтовиксен çемьисемшĕн куллен тăрăшмалла

Партипе правительство военнослужащисен çемьисене пособи тата тĕрлĕрен льготăсем парса пулăшаççĕ. Фронтовиксен çемьисемшĕн пĕтĕм совет халăхĕ тăрăшать. Пирĕн республикăри ĕççыннисем те Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсен çемьисене вутă хатĕрлесе тата турттарса парса, вĕсене таса та çутă хваттерсене вырнаçтарса, фронтовиксен ачисене ача сачĕсемпе яслийĕсене вырнаçтарса, колхозсенчи пулăшу кассисенчен тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç парса, çавăн пекех тата тумтир, урана тăхăнмалли япаласем парса пулăшаççĕ.

Фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕçе вăйлатас шутпа ВКП(б) Обкомĕ республикăра мартăн 15-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче фронтовиксен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăх ирттерме йышăннă. Партипе совет тата Профсоюз организацийĕсем çак вунăкунлăхра фронтовиксен мĕнпур çемьисене шута илсе, вĕсем мĕнле условисенче пурăннине тĕрĕслесе тухмалла çеç мар, çавăнпа пĕрлех вĕсен нушисене тивĕçтерме те пулăшмалла. Районсенчи, хуласенчи мастерскойсемпе усă курса, фронтовиксен çемьисене атă-пушмак, тумтир юсаса тата çĕнĕрен çĕлеттерсе памалла. Суту-илӳ организацийĕсен сутмалли фондпа фронтовиксен çемьисене пулăшнă çĕрте ытларах усă курмалла. Колхозсем фронтовиксен çемьисене пысăккăн пулăшма тивĕçлĕ. Вĕсем выльăх-чĕрлĕхсĕр çемьесене çамрăк выльăхсем парса пулăшма пултараççĕ.

Фронтовиксен хваттерĕсене юсас ыйтăва та манма кирлĕ мар. Хуласенче тата ялсенче фронтовиксен çемьисен хватерĕсене юсас тĕлĕшпе ятарласа уйрăм бригадăсем тума та юрать.

Фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕçе хуласенчи тата ялти мĕнпур общественноçа, пĕтĕм ĕççыннисене явăçтармалла. Уйрăмах эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсен çемьисен нушисене тивĕçтерессипе çине вăйлăн çавăрăнса пăхмалла. Вĕсем çитес çуракиччен пахча-çимĕç, çĕрулми лартса хăварччăр тесе, вĕсене халех çĕр лаптăкĕсем уйăрса памалла, вăрлăхсем тупма пулăшмалла.

Фронтовиксен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăхăн малтанхи кунĕ — мартăн 15-мĕшĕ çакна кăтартса пачĕ: Шупашкар хулинче фронтовиксен çемьисен пурнăçпа йăла условийĕсене тĕрĕслеме хулари мĕнпур общественноçа мобилизациленĕ. Хулара ку тĕлĕшпе 118 çын тата урам комитечĕсен председателĕсем пысăк ĕç туса ирттернĕ.

Бунин юлташ директор заместителĕ пулса тăракан заводра фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ятарласа комисси организациленĕ. Завод дирекцийĕпе профсоюз организацийĕ фронтовиксен çемьисене пулăшмалли мероприятисене палăртнă. Унта фронтовиксен çемьисене сутма 200 килограмм макарон, 100 килограмм çу, 1.500 метр мануфактура уйăрнă тата 150 кубометр вутă турттарса пама йышăннă.

Вăрнар районĕнче партипе совет активне колхозсене командировкăна янă. Вĕсем унта фронтовиксен çемьисене пулăшма продовольстви фончĕсем организациленĕ. Вунăкунлăхăн пуçламĕш кунĕнчех фронтовиксен çемьисене 600 пăт тырă, 600 пăт çĕрулми парса пулăшнă.

Анчах хăшпĕр районсенче мартăн 15-мĕшĕнче нимĕнле ĕç те туса ирттермен. Унти партипе совет организацисен руководителĕсем вунăкунлăхăн тĕллевĕпе задачисене уçăн ăнланман пулас. Вунăкунлăх вăхăтĕнче фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелле. Фронтовиксен çемьисемшĕн куллен тăрăшмалла.

Л. Молгачева.

Отечественнăй аслă вăрçă историйĕн материалĕсене пухар

Отечественнăй аслă вăрçă материалĕсене пухас тата унăн историне çырас тĕлĕшпе ĕçлеме республикăра комисси организациленĕ.

Комисси Совет Союз Геройĕсемпе отечественнăй вăрçă геройĕсем çинчен çырнă статьясене, геройсен калавĕсене, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем тата тусĕсемпе юлташĕсем каласа панисене пухать.

Комиссие промышленноçпа ялхуçалăхне çĕршыв оборонишĕн ĕçлеме урăхлатса çĕнетнине (фронт сывăхĕнчи районсенчен куçса килнĕ предприятисем мĕнле ĕçленине, ĕççыннисен тылри мухтава тивĕç ĕçĕсене, предприятисенче, учреждениссенче тата колхозсемпе совхозсенче, МТС-сенче социализмлă ăмăрту мĕнле пулса пынине, вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсен ĕçне) кăтартакан материалсем те кирлĕ пулаççĕ.

Ĕççыннисем фронта тĕрлĕ майсемпе пулăшса тăнине, ăшă тумтирсем, танксемпе самолетсем тума укçа тенкĕ пухнине, боецсем патне парнесем ярса панине, донорсен движенийĕ çинчен, тăлăха юлнă ачасемпе фронтовиксен ачисене пăхса çитĕнтерме илни, Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнă районсемпе хуласене пулăшни т. ыт. çинчен пĕлтерекен материалсене те комисси валли ярса памалла. Комисси çавăн пекех наукăпа культура учрежденийĕсем, партипе совет, комсомолпа профсоюз организацийĕсем вăрçă вăхăтĕнче мĕнпур майсемпе ресурссене мобилизацилесе фронта пулăшса тănине тата районсемпе хуласен ĕçне вăрçă вăхăчĕ ытнă пек çĕнетсе урăхлатнине кăтартакан материалсене те пухать.

Комисси Хĕрлĕ Çара хăйсен ирĕкĕпе кайнă çынсем çинчен çырнă çырусене тата вĕсен фронтран янă çырăвĕсене, фашизма хирĕçле фольклора, Хĕрлĕ Çар геройĕсен портречĕсемпе сăнӳкерчĕкĕсене, çапăçу эпизочĕсене, пичетлесе кăларнă тата сăрласа тунă афишăсене, листовкăсене т. ыт. те пухать.

Çак материалсене вырăнсенче ВКП(б) райкомĕсен агитаципе пропаганда отделĕсен, предприятисенчи парторгсен пухмалла. Пухăннă материалсене йăлтах ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделне «**Отечественнăй аслă вăрçă историйĕн материалĕсене пухас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси валли**» тесе палăртса ярса памалла.

Отечественнăй аслă вăрçă материалĕсене пухас тĕлĕшпе ĕçлекен республикăри комисси Совет Союз Геройĕсем çинчен, отечественнăй вăрçă геройĕсем çинчен, тылри геройсем çинчен кĕнекесем кăларать.

Çак материалсене вăхăтра пухни пропагандăпа агитаци ĕçне туса пырас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Тепĕр енчен вĕсем чăваш халăхĕ отечественнăй аслă вăрçа мĕнле хутшăннине кăтартса паракан тĕп материалсем пулса тăраççĕ.

Наукăпа тĕпчев учрежденийĕсен, аслă шкулсен, архивсемпе музейсен, шкулсен, библиотекăсен, социализмлă культура çурчĕсен, партипе комсомол тата профсоюз общественноçĕн, пичет тата искусство работникĕсен çўлте асăннă материалсене пухма комиссие пулăшмалла.

Уйăп Мишши

Малалла, Хĕвеланăçнелле!

Кур, боец, тыткăнри хуласем сан умра.
Ишĕлеççĕ, çунаççĕ вутра, çулăмра.
Кур, боец, сан умра юн-суранлă ялсем.
Халь асаççĕ унта нимĕçсем-ирсĕрсем.

Шăршлă, пыйтлă фрицсем халь утаççе унта.
Хаяр çилĕ чĕрӳнта. Хĕçпăшал аллунта.
Çав усал тăшмана çапса çĕмĕрмелле!
Малалла! Малалла! Хĕвеланăçнелле!

Кур, боец, сан умра вĕçхĕррисĕр уйхир.
Унта ирĕк, телейлĕ ĕçленĕ эпир.
Унта тулăх тырпул ўсетчĕ, пĕлен.
Ылттăн-ылттăн хумсем ыткăнатчĕç çуллен.

Халь унта фашистсем! Хирсем пушă, хура.
Халь кусмасть ылттăн хум. Хыт-хура шăхăрать.
Çав тăван хирсене сан туртса илмелле!
Малалла! Малалла! Хĕвеланăçнелле!

Вырт, боец, çĕр çумне, тимлĕн, тимлĕн итле.
Тыткăнра тăван çĕр йынăшать, ĕсĕклет.
Пăхсам эс тĕтĕмри-сĕрĕмри инçете.
Мăшкăлри тăван çĕр пĕр сана-çке кĕтет.

Вăл кĕтет хăйĕн паттăр ывăльсене.
Вăл чĕнет, вăл хушать, саламлать вĕсене.
Тăшманран сан тăван çĕре тасатмалла!
Хĕвеланăçнелле! Малалла! Малалла!

Тыткăнри çĕр çинче, çав хула-ялсенче—
Унта пирĕн çынсем нимĕç пусмăрĕнче,
Айăпсăр таса юн тăкăнать-çке куллен
Сан аçун, сан аннӳн, арăмун, ачусен.

Таптаса хĕр чысне, санăн юратăва
Ирсĕр фриц выльăхла унта мăшкăл тăвать.
Тăванна вилĕмрен, мăшкăлран çăлмалла!
Хĕвеланăçнелле! Малалла! Малалла!

Сан умра Украина çĕршывĕ выртать.
Аслă ылттăн çĕршыв асапра, пусмăрта.
Асапра Белоруссия. Ытти çĕршывсем...
Пурте, пурте кĕтеççĕ сана çеç вĕсем.

Шавлă Днепр кĕтет. Сенкер шывлă Дунай.
Ав, мăнаçлă Карпат тăвĕсем асăнаç.
Пур çĕре те сан пурнăç ăшши кӳмелле.
Малалла! Малалла! Хĕвеланăçнелле!

Сан хыçра ирĕк халăх хӳме пек тăрать!
Сан хыçра чаплă паттăр—хула Сталинград.
Ун мухтавĕ сан ра, ăн [illegible]арт-кайăк—боец,
Ун чапне, мухтавне ялав пек йăтăн эс.

Тăван халăх хушать тăшмана пĕтерме.
Аслă Сталин хушать тăшмана çĕнтерме.
Хурçă вăй-хăватпа чи хаяр тăвăлла
Ăнталар Хĕвеланăçнелле! Малалла!

Фронта пулăшасси вăйланчĕ

КАЛИНИНО. ССР Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен Верховный Главнокомандующине Сталин юлташа Совет Союз Маршалĕн званине пани районри ĕççыннисене çĕнĕ çитĕнӳсем тума çĕклерĕ.

Шĕнерти «Майăн 1-мĕшĕ» тата Çавалкассинчи «Çуталла» колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 150 центнер тырă хыврĕç. Çак колхозсен пуçарăвĕпе районри ытти колхозсем те Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывма пуçларĕç. Паянхи кун тĕлне районĕпе пурĕ 2.000 центнер ытла хывнă.

Лесничество коллективĕ (лесничи Е. Арсентьев) апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне çурçулти плана пурнăçлама обязательство илнĕ. Çав обязательствăна пурнăçлассишĕн рабочисемпе служащисем Май уявĕ умĕнхи социализмă ăмăртăва тухрĕç. М. Карягин, П. Муравьев, П. Михайлов юлташсем кулленех икĕ çыншăн ĕçлеççĕ.

Б. Шорников.

Аслă вырăс çыннисен япалисене шута илни

РСФСР Наркомпросĕн музей отделĕ музей фончĕсене инвентаризаци туса ирттерет. Историллĕ е художествăллă питĕ паха пуянлăхсене государствăн пĕрлĕхлĕ учетне илеççĕ. Кашни япала валли упрамалли хут параççĕ. Ку таранччен пин япалана ытла учета илнĕ. Вĕсен шутĕнче аслă вырăс çыннисен — полководецсен, ученăйсен, писательсен, общество деятелĕсен, вырăс хĕçпăшалĕн геройĕсен япалисем пур. (ТАСС).

ÇУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНСЕ КĔТСЕ ИЛЕР

Акмалли çĕр лаптăкне нумай саратпăр

СОВЕТСКОЕ, мартăн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Советски районри çĕрĕç пайĕ колхозсене производство планĕсем тума кăтартусем пачĕ. Ку тĕлĕшпе нумаях пулмасть кустсенче колхоз председателĕсен инструкциллĕ канашлăвĕсене туса ирттернĕ. Унта колхоз председателĕсене кăçал тумалли ĕçсем çинчен çирĕп кăтартусем панă.

Енер районри колхоз счетовочĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура колхозсен 1943 çулхи приходпа расход сметисене тăвасси тата çураки вăхăтĕнче учет ĕçне йĕркелесе пырасси çинчен кăтартусем панă.

Хал колхозсем çулталăкри производство планĕсем тăваççĕ. Ĕç нормисене, ĕçшĕн тӳлемелли йĕркесене пăхса тухса çирĕплетеççĕ. Кашни культурăна мĕн чухлĕ акмаллине палăртаççĕ. Кăçал пирĕн районри колхозсем акмалли çĕр лаптăкне татах та 17—20 процент ӳстерме палăртаççĕ, халиччен усă курман çĕр лаптăкĕсемпе те усă курма хатĕрленеççĕ тата кĕрхи çĕртме вырăнне те ирттерех пулакан тырăсем акатпăр. Çакă вăл пире Хĕрлĕ Çарпа тăван çĕршыв валли тырă пиншер тонна ытларах туса илме май парать. Акмалли çĕр лаптăкне сарас ыйтăва колхозсем хăйсен çулталăкри производство планĕсене тунă çĕрте тĕп вырăна хураççĕ.

Ф. Новиков.

Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Кашни колхоза—счетовод

ЕТĔРНЕ, мартăн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Енерхи куна районри 47 колхоз хăйсен 1942 çулхи ĕçĕсем çинчен отчетсем туса тупăш валеçес ĕçе вĕçлерĕç. Отчет туса, çитермен колхозсем районра 4 çеç юлчĕç.

Колхозсен çулталăкри отчетне тата тупăш валеçмелли ведомоçне çырас тĕлĕшпе хăшпĕр счетоводсем лайăх ĕçлерĕç. Киров ячĕпе тăракан колхоз счетовочĕ Моськин юлташ отчета хăвăрт тата пĕр йăнăшсăр туса пачĕ. Хăйĕн колхозĕнче отчет çырса панă хыççăнах вăл ытти колхозсене пулăшма кайрĕ. Халĕ Моськин юлташ «Красный пахарь» колхозăн отчетне çырать. Орапакассинчи «Правда» колхоз счетовочĕ Капитонова юлташ та отчета вăхăтра тата пысăк пахалăхпа çырса пачĕ. Çавăн пекех Тельман ячĕпе тăракан колхоз счетовочĕ Ильин юлташ хăйĕн колхозĕнче отчет çырнă хыççăн Кĕçĕн Сĕнтĕрти «Великан» колхоза та отчет çырса пачĕ.

Колхозсен çулталăкри отчечĕсене тăвас тĕлĕшпе кăçал район каярах юлчĕ. Çакă вăл колхозсенче счетоводсем час-часах улшăнса тănипе пулчĕ. Çакна шута илсе кăçал эпир çуракине тухиччен кашни колхозрах счетоводсене лартса çирĕплетме тăрăшатпăр. Счетоводсем хатĕрлекен курс уçрăмăр. Унта халĕ 20 çын вĕренеççĕ. Кунсăр пуçне районсем пĕрле организациленĕ курсран 8 счетовод вĕренсе килеççĕ. Çапла пирĕн колхозсенче кăçал счетоводсем çителĕклĕ пулаççĕ.

Е. Петров,

Райçĕрĕç пайĕн инструктор-бухгалтерĕ.

Тупăш валеçес ĕçе халех вĕçлемелле

КУКЕÇ, мартăн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Çуракине хатĕрленсе çитес ĕçе колхозсем иртнĕ çулта тунă ĕçсем çинчен отчетсем хăвăртрах туса тупăш валеçес ĕçе вĕçлессипе çыхăнтарса пыраççĕ. Паянхи куна çак отчетпа ĕçе районри 94 колхоз ăнăçлăн вĕçлеççĕ. Райсовет исполкомĕ 78 колхозăн отчетне пăхса тухса çирĕплетрĕ. Отчет туса çитермен колхозсем тата 4 пур. Вĕсен тупăш валеçес ĕçе халех вĕçлемелле.

Н. Васильев,

Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Нĕркечри почта уйрăмĕн ĕçĕсем

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Нĕркечри почта уйрăмĕ чылай вăхăт хушши начар ĕçлесе пынă. Начальниксем тăтăшах улшăнса тăни пирки, унта ĕç дисциплини сӳрĕк пулнă. Хаçатсене тата çырусене вăхăтра çитересси пирки ним тăрăшман. Посылкăсене çухатнă фактсем те чылай пулнă. Почта уйрăмĕн начальникĕ письмоносецсем ĕçĕпе пачах интересленмен.

Почта уйрăмне ертсе пыма П. Талеров юлташа уйăрса лартсан, почта ĕçĕ лайăхланчĕ. Талеров юлташ хăйĕн ĕçне тĕрĕс йĕркене кĕртсе пырать. Корреспонденцисене кирлĕ çĕрте вăхăтра çитерессипе тăрăшать.

Фронтовиксен çемйисене кашни уйăхрах пособи укçи тӳлеççĕ. Нĕркечри почта уйрăмне 7 ял кĕрет. Талеров юлташ пособи укçине çав ялсенчи ĕççынисене хăй салатса парать. Ĕçе тĕрĕс организацилеме пĕлнĕ пирки, вăл çак ĕçе туса виçĕ кун çеç ирттерет. Фронтовиксен çемйисемпе çакнашкал тăрăшнăшăн Талеров юлташа колхозниксем тата аманса таврăннă красноармеецсем тав тăваççĕ.

Талеров юлташ хăй лайăх ĕçленипе письмоносецсене пример кăтартать. Унăн примерĕпе Янкассинчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз çамрăк письмоносецĕ А. Краснов ĕçе лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Хаçатсене çырусене вăл вăхăтра салатса парать. Кунсăр пуçне вăл хаçатсем çинчен çĕнĕ хыпарсене вулать. Хирти Сĕнтĕрти «Победа» колхозри письмоносец Н. Тестов та хăйĕн ĕçне лайăх туса пырать.

Çак çитĕнӳсене социализмлă ăмăртура ĕçлени тунă. Лайăх ĕçленĕшĕн çыхăну конторин районри уйрăмĕ П. Талеров юлташа 200 тенкĕ преми панă. Максимова телефонисткăна та 100 тенкĕ парса премиленĕ. Нĕркечри почта уйрăмĕнче ĕçлекенсем халĕ Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç.

Тĕвенешри «Комбайн» колхоз письмоносецĕ Романов юлташ çак ĕçе 15 çул ĕçлет ĕнтĕ. Колхозниксем хушшинче вăл пысăк авторитетпа усă курать. Хаçат-журналсене тата çырусене вăхăтра салатса тăнисĕр пуçне, Романов юлташ колхозниксем хушшинче агитацилле-массăллă ĕçе лайăх туса пырать.

Н. Виноградов.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Пропагандăпа агитаци ĕçне—çӳллĕ пусăма

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Çак кунсенче коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура районри пропагандăпа агитаци ĕçĕ мĕнле пулса пыни çинчен ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Долгов юлташ докладне илтсе сӳтсе явнă.

Пропагандăпа агитаци ыйтăвĕсене тивĕçлипе туса пыракан колхозсемпе предприятисенче мĕнпур ĕçсем ăнăçлăн пулса пынине куратпăр. «Восход», «Большевик» тата ытти колхозсенче иртнĕ çулта вăйлă тухăç пул илнĕ.

Вăйлă тырпул туса илес, выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерес тĕлĕшпе ялхуçалăхĕнче ăнăçусем тунăшăн «Восход» колхоз председателĕ Волков тата ытти колхозниксем те Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Çавăн пекех районри крахмал тăвакан заводпа инвалидсен артелĕ 1942 çулти çулталăк планне ирттерсе тултарчĕç. Çӳлте асăннă колхозсемпе предприятисенче пропагандăпа агитаци ĕçĕ вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек пулса пынă. Çапла вара, районĕпе пĕлтĕр лекцисемпе докладсене 12.000 çын итленĕ.

Пуху çакăнпа пĕрлех пропагандăпа агитаци ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ.

«Красная Чувашия», «XI лет Чувашии», Ворошилов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем çуракине вăраххăн хатĕрленеççĕ. Вĕсенче çураки валли кирлĕ вăрлăхсене паян кунччен те хатĕрлесе хуман, ялхуçалăх машинисене юсаса çитермен. Партин хăшпĕр колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсем (Турханти П. Пашьелти) çуракине хатĕрленес ĕçе тивĕçлипе ертсе пымаççĕ. Вĕсем колхозниксем хушшинче пропагандăпа агитаци ĕçĕ хăй тĕллĕн пулса пырасса шанаççĕ.

Пуху пропагандăпа агитаци ĕçне чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ыйту тавра кирлĕ пек йĕркелеменнине кăтартса хăварчĕ. Çавна пула чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ĕç «Авангард» (председателĕ Пузырев), Ленин ячĕпе тăракан (председателĕ Иванов) колхозсенче питех те сӳрĕккĕн пулса пырать. Çӳлте асăннă колхозсемпе вĕсен руководителĕсем тата унти агитколлективсен руководителĕсем мирлĕ вăхăтри шухăш-кăмăлсемпе пурăнас йăлана пăрахман-ха.

Пренире тухса каланă коммунистсем ВКП(б) райкомĕн парткабинечĕн ĕçĕсене тишкерчĕç. Парткабинет парти историне, Сталин юлташăн отечественнăй вăрçă çинчен тунă доклачĕсемпе приказĕсене вĕренекенсене начар пулăшса пырать. Кунта сайра-хутра çеç консультацисем, лекцисемпе докладсем пулса иртеççĕ. Уйрăмăнах парткабинет колхозниксем хушшинче тăван чĕлхепе докладсемпе калаçусем тăвас ĕçе тивĕçлипе йĕркелемен. Çавăн пекех пуху ялсенчи клубсемпе вулав çурчĕсен ĕçне вăйлатма кирлине асăрхаттарса хăварчĕ. Кубняри, Кĕçĕн Кармалри вулав çурчĕсем тата райцентрти клуб хальхи вăхăтра нимĕнле ĕç те тумаççĕ.

Пуху районри ĕççыннисене вăрçă ĕçне вĕрентес, пичет пропагандине тивĕçлĕ вырăна лартас тата Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярас ыйтусем тăрăх та тивĕçлĕ решенисем йышăнса хăварчĕ.

В. Давыдов.

Çурхи шывшур сиен кӳрессинчен сыхланас ĕç

Çурхи шывшур халăх хуçалăхне пысăк сиен кӳме пултарать. Çавăнпа та çурхи шывшура хирĕç кĕрешме малтанах хатĕрленес пулать.

Чăваш АССР Совнаркомĕ, çак ыйтăва пăхса тухса, çурхи шывшура хирĕç кĕрешес ĕçе ертсе пыма Республикăн Комиссие уйăрса çирĕплетрĕ. Комиссие Совнарком председателĕ А. Матвеев юлташ ертсе пырать. Комисси членĕсем: республикăн милици Управленин начальникĕ Я. Никитин, НКВД пожарнăй охрана отделĕн начальникĕ Шарко, Коммуналлă Хуçалăх Наркомĕ И. Новиков, полковник Макаров юлташсем.

Районсенче хуласенче çурхи шывшура хирĕç кĕрешес ĕçе ертсе пыма районри е хулари комиссисене халех уйăрса çирĕплетес пулать, комиссисене ĕçе ертсе пыма исполкомĕсен председателĕсем ертсе пымалла.

Çурхисене шыв илме пултаракан предприятисенче, учрежденисенче çурхи шывшур вăхăтĕнче талăкĕпех дежурнăйсем пулмалла.

Уйрăмăнах кĕперсемпе плотинăсене (пĕвесене) хӳтĕлес тĕлĕшпе та тăкла мерăсем йышăнас пулать, кĕперсем умĕнче пăра ватакан сооруженисем тăвас пулать.

Шыв илекен вырăнсенче çуртсене çирĕплетес пулать, вĕсен аялти хучĕсенчи чӳречисене хăмасемпе çапса лартмалла. Шыв илекен вырăнсенчен тата пристаньсенчен хаклă япаласене тата хатĕр продукцие вăхăтра турттарса тухмалла.

Шывшур вăхăтĕнче шыв илекен районсенчи предприятисене пĕр чăрмавсăр ĕçлеттерес тесе, топливăн тата ытти материалсен запасне кирлĕ чухлех хатĕрлесе хурас пулать.

Çурхи шывшура хирĕç кĕрешме кирлĕ хатĕрсене (ломсене, кĕреçесене, пакурсене, фонарьсене, вĕренсене) вăхăтра хатĕрлесе хурас пулать.

Пăр кайнă вăхăтра Атăл тата Сăрă шывĕсенче юхакан йывăçа тытасси çинчен

Пăр кайнă вăхăтра Атăл тата Сăрă шывĕсенче юхакан йывăçа тытас ыйтăва пăхса тухса, Чăваш АССР Совнаркомĕ государство тата кооперативлă организацисене йывăç тытма ирĕк панă.

Юханшыв Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсем хăйсен вăйĕпе тытнă йывăçа хăйсем валлиех хăвараççĕ, государство тата кооперативлă организацисем тата предприятисем тытнă йывăç та вĕсен валлинчех юлать, анчах вăл çав предприятисене тата организацисене валли уйăрнă фонд шутне кĕрет. Фонд уйăрса паман предприятисем хăйсем тытнă йывăça пĕтĕмĕшпех вырăнти топливо промышленность предприятийĕсене параççĕ.

Кунсăр пуçне предприятисемпе уйрăм çынсем тытнă йывăçран, райплансемпе килĕшнĕ тăрăх, вĕсене вутăлăх уйăрса пама пултараççĕ. Атăл тата Сăрă шывĕсенче тытнă йывăçăн кашни кубометрĕшĕн предприятисемпе уйрăм çынсене 10 тенкĕрен пуçласа 12 тенкĕ çити укçа тӳлеççĕ.

Атăлпа Сăрă шывĕ тăрăхĕнчи районсенчи исполкомсен çав шывсем тăрăх юхакан йывăçа тытма кирлĕ мерăсене йышăнас пулать, ятарласа бригадăсем организацилемелле, кирлĕ инвентарьсене хатĕрлемелле.

Ют çĕршывсенче

Францин наци комитечĕн меморандумĕ тата Жиро генералăн сăмахĕ

ЛОНДОН, мартăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Францин наци комитечĕ Жиро генерал патне февралĕн 23-мĕшĕнче янă меморандумăн текстне пичетлесе кăларнă.

Наци комитечĕ, тенĕ меморандумра, пĕрлешес тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме шутлать. Çакна тума ун шучĕпе çакăн пек условисем кирлĕ:

Вишири суя правительство Франци хирĕç гитлерла Германипе тунă «перемири» тенине французла Африкăра пуçпех йышăнмалла мар. Францин пур территорийĕсенче те вĕсене ирĕке кăларса пынăçемĕн Францин государство стройĕн никĕсĕнче пулнă тата пĕрлешӳллĕ нацисем кĕрешекен ирĕклĕхсене тепĕр хут каялла тавăрмалла. Çав ирĕклĕхсене пăсса арестленĕ пур граждансене те халех ирĕке кăлармалла тата фронтовиксем пулнисен легионĕ пек организацисене салатса ямалла. Вишири узурпаторла власть Франци ирĕксĕрлесе йышăнтарнă законсене пĕтĕмпех пăрахăçа кăлармалла. Республикăллă законлăха тата вырăнти республикăллă учрежденисене çĕнĕрен туса хумалла. Çĕршыва ирĕке кăларнă хыççăн пурне те тивĕçлĕ суйлав прави тăрăх халăхăн представительлĕ учрежденине суйламалла, вăл вара Франци конституцине йышăнсе çĕнĕ правительство палăртса хумалла. Çав представительлĕ учреждени çирĕплетмесен вăрçă пĕтиччен ют çĕршывсемпе тунă килĕшӳ законлă шутланма пултараймасть. Вăхăтлăх тĕп влаçа туса хурсанах ун çумĕнче кĕрешекен Францин совещательнăй советне туса хумалла. Вăл совета метрополири хирĕçекен организацисен делегачĕсем тата кĕрешекен группăсен представителĕсем кĕмелле. Кунсăр пуçне парăнас политикăпа çыхăнман парламент членĕсем тата ирĕке тухнă территорисенчи тĕрлĕ общество организацийĕсенчен суйланă çынсем кĕмелле.

Меморандумра тата французсен Африкинче тĕрлĕ çар, дипломати тата экономика ыйтăвĕсене пĕрлешсе татса пама халех анлăн пĕрлешсе ĕçлеме кирлине кăтартса панă.

ЛОНДОН, мартăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Генерал Жиро ĕнер радиопа сăмах тухса каланă. Вăл каланипе, Франция Эльзаспа Лотарингие нимĕçсем Германипе пĕрлештернине йышăнмасть. Хăйĕн союзникĕсемпе пĕрле Франция та çĕнтерӳ тăвас ĕçе хутшăнĕ, çĕнтерӳ нацисем хушшинче хăйĕн вырăнне йышăнĕ. Касабланкăра пулнă калаçусенче, тенĕ Жиро, Франци çарĕсем валли снабжени тăратма йышăннăччĕ, вăл ĕç пуçланнă та ĕнтĕ.

Хăйĕн вăхăтлăх правительствине суйлас правăпа Францин халăхĕ усă курĕ, тесе ĕнентернĕ Жиро. Вăл правительствăна законлă йĕркепе суйлама пур условисене те тăвăпăр, çавăн пекех тата ирĕклĕхсене пурне те каялла тавăрмалла тăвăпăр, тенĕ. 1940 çулхи июнĕн 22-мĕшĕ (Франци парăнтарнă кун) хыççăн йышăннă пур законсем те, вăл законсене Виши правительстви хăйĕн ирĕкĕпе-и е ют çĕршывсем хушнипе йышăннă-и — законлă шутланма пултараймаççĕ.

Франци йăлисене тепĕр хут чĕртсе ямалли мерăсене пурне те халех йышăнăпăр, тенĕ Жиро. Муниципальнăй пухусемпе муниципальнăй советсем хăйсен ĕçне ĕлĕкхи пекех туса пыракан пулĕç. Раса законĕсене пурне те пăрахăçа кăлармалли çинчен приказ кăларнă. «Эпĕ, — тенĕ Жиро юлашкинчен, — çак каласа панă тĕп принципсене йышăнакансемпе, Франци халăхне эпĕ паракан чыслă сăмаха йышăнса тăшманпа çапăçма хатĕр тăракансемпе пурнпе те пĕрле ĕçлеме хатĕр», тенĕ.

ЛОНДОН, мартăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, генерал Жиро радиопа тухса каланă сăмах пирки генерал де Голль çакна палăртнă: «Генерал Жиро сăмахĕ нумай енчен кĕрешекен Францин доктринине йышăнас çул çинче пысăк çитĕнӳ пулнине эпĕ хавасланса паллă тăватăп. Вăл доктринăна 1940 çулхи июнь уйăхĕнче малтан палăртнă, наци комитечĕн меморандумĕнче февралĕн 23-мĕшĕнче ăна тепĕр хут паллă тунă. Францирен килсекен тем чухлĕ пĕлтерӳсем вăл доктринăна пусмăр тӳсекен нацин чи пысăк пайĕ хĕрӳллĕн ырлани çинчен калаççĕ.

Генерал Жиро тунă деклараци Алжирта, Касабланкăра, Дакарта пулакан ĕçсенче палăрĕ, тесе наци комитечĕ халĕ шанса тăрать. Кирек епле пулсан та эпир французсем хушшинче Франци çĕрĕсене пĕрлештермелли пур условисемпе методсене те тĕпчесе пăхма хатĕр. Вăл ĕнтĕ вăрçакан Францин интересĕсемшĕн питех те кирлĕ», тенĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 13-мĕшĕнче кăнтăрла Америка бомбардировщикĕсем Хĕвеланăç Франци çине вĕçсе пырса тапăннă. Пуринчен ытла Амьенри сортировка станцийĕпе паровоз деповне атакăланă. Çавăн пекех тата Абвильпе Пуари чугунçул узелĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, мартăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер «Уирлинд» йышши бомбардировщиксем тăшманăн Францири аэродромĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă.

Мартăн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем Неаполь гаванĕ çине вĕçсе пырса тапăннă.

Мартăн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Германири тата оккупациленĕ çĕршывсенчи тăшман коммуникацийĕсене атакăланă. Тăватă поезд çине бомбăсем пăрахнă.

Тăшман самолечĕсем Оссекс графствинчи икĕ пункт çине бомбăсем пăрахнă. Вилнисем пур.

ЖЕНЕВА, мартăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлеровецсен Эссенра тухса тăракан «Националь цейтунг» хаçачĕ йышăннă тăрăх, мартăн 13-мĕшĕнче çĕрле Англи авиацийĕ хулана вĕçсе пырса тапăннă хыççăн унта халь ниепле йĕрке те çук. Влаçсем Эссенра вăрçăллă положени туса хунă. Аркатусем çав тери вăйлă пулнипе кама та пулин хăвăрт пулăшу пама май çук. Тапăннинчен сиен курнисем валли çуртсем çитмеççĕ.

ГЕРМАНИ АВИАЦИЙĔ ЛОНДОНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 12-мĕшĕнче нимĕçсен 24 самолечĕ Темза шывĕ тинĕсе юхса кĕнĕ района пырса çитнĕ. Вĕсенчен хăшпĕрисем Пысăк Лондон патне çитнĕ, унта бомбăсем пăрахнă тата урам хушшисене пулеметпа пенĕ.

Жертвăсем пур. Лондон таврашĕнче пысăк мар çуртсене нумай аркатнă.

США СЕНАЧĔ ХĔÇПĂШАЛА КИВÇЕН Е ТАРА ПАРАС ЗАКОНА МАЛАЛЛА ТĂСНĂ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Икĕ сехет кăна пынă пренисем хыççăн США сеначĕ хĕçпăшала кивçен е тара парас закона тата тепĕр çуллăха тăсас законопроекта ырланă.

Çавăн хыççăн тӳрех Рузвельт законопроект çине алă пуснă.

США-ра ÇАР ПРОИЗВОДСТВИ ӲСНИ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). (Вăхăтра çитереймен). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, США çар министрĕн заместителĕ Патерсон çапла каланă: кăçалхи çул хĕçпăшалсемпе боеприпассем тăвас ĕç иртнĕ çулхинчен виçĕ хут ытла ӳсмелле.

Январьпе февраль уйăхĕсенче çар промышленноçĕ 150.000 пулемет, 134.000 автомат, 28.000 ытла грузовик, 2.000 противотанковăй оруди тата 5.000.000 мăшăр салтак атă-пушмакĕ туса кăларнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР-ĕнчи Госкредитпа гострудсберкассăсен управленийĕ çумĕнче государство заемĕсем выляса илнипе илменнине тĕрĕслекен бюро ĕçлет.

Çак бюро ĕçĕпе усă курас текенсен (облигаци тытакансен) уйрăм карточка çырса тултарас пулать. Унта облигаци серийĕн номерне, мĕнле заемне тата почта адресне кăтартас пулать. Çырнă карточкăсене управленине яма сберкассăна памалла.

Карточкăсене кирек хăш сберкассăра та 15 пус укçа тӳлесе илме пулать. Карточкăсем тӳлевсĕрех çӳреççĕ.

Чăваш АССР-ĕнчи Госкредитпа гострудсберкассăсен управленийĕ.

3—1

СССР Промышленность банкĕн Чăваш республикинчи конторине инженер-строитель, машинистка, бухгалтерсем, кредитнăй инспекторсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Карл Маркс урамĕ, 27 (Госбанк çурчĕ).

—1.

Художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленме халех тытăнмалла

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче художествăллă пултарулăх кружокĕсен хăйсен ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла. Хаваслă юрăсем, çивĕч частушкăсем юрласа памалла, патриотла пьесăсем лартмалла. Художествăллă пултарулăх кружокĕсен халăхăн шухăш-кăмăлне хăпартса пымалла, халăха ĕçре çитĕнӳсем тума хавхалантармалла.

Художествăллă образсем урлă искусство ĕçхалăхĕн туйăмĕсене вăратать. Илемлĕ формăпа, хитре краскăсемпе, илемлĕ юрăпа, художествăллă сăмахăн мастерлăхĕпе этем кăмăлне тултарни çав вăхăтрах çынсене воспитани парса пырать, вĕсен культурине пуянлатать. Совет искусствин задачи вăл ĕçхалăхне коммунистла воспитани парас задачăран тухса тăрать.

Республикăра чылай кружоксем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсен шутне Бунин юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен заводри хор кружокне, Сĕнтĕрвăрринчи соцкультура çуртĕнчи хор кружокне (руководителĕ—композитор Тогаев), Шăхасан районĕнчи Тимĕрçкассинчи хор кружокне (руководителĕ Кузнецов). Комсомольскинчи вăтам шкулăн драмкружокне (руководителĕ Харитонова) кĕртмелле. Нумаях пулмасть çак кружок спектакльсем лартса оборона фондне 4.518 тенкĕ укçа пухса панă. Анчах çакăн пек ĕçлекен кружоксем сахал-ха.

Хăшпĕр соцкультура çурчĕсенче, колхозсемпе заводсен клубĕсенче, вулав çурчĕсенче, туллимар вăтам тата вăтам шкулсенче, ФЗО шкулĕсемпе ремесленнăй училищĕсенче кружоксем вуçех те çук. Вĕсенче пуринче те художествăллă пултарулăх кружокĕсем ĕçлемелле.

Кружоксемпе агитбригадăсен ĕçне çитес вăхăтра çуракине тĕплĕн хатĕрленсе ăнăçлăн ирттерес ĕçсемпе çыхăнтарса туса пымалла. Колхозниксем каннă вăхăтра, апат çинĕ вăхăтра, ĕç пĕтнĕ хыççăн кружоксен хăйсен ĕçне анлăн туса пымалла. Художествăллă пултарулăха хутшăннă юлташсенчен концертпа эстрада ушкăнĕсем тума юрать. Вăл ушкăнсен программине хорпа юрламалли юрăсене, ташăсене, илемлĕ вулассине, частушкăсем юрласа парассипе кĕртмелле.

Çак ушкăнсем 20—30 минутлă выступленисем туса ирттерме пултараççĕ, вĕсене стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăларма, социализмлă ăмăрту хăмисене йĕркелеме пулăшмалла.

Кашни кружоках ку тĕлĕшпе тĕрлĕрен ĕçсем туса ирттерме пултарать. Драмкружоксем пĕр актлă пьесăсем лартса пама, сăвăсем, фельетонсем, калавсем вуласа пама пултараççĕ. Массовик-затейниксем кану вăхăтĕнче тата ĕç пĕтернĕ хыççăн ташăсемпе вăйăсем организацилеме тивĕç. Ĕçхалăхне политикăллă воспитани парас ĕçре наглядлă агитаци паллă вырăн йышăнса тăрать. Вăл шута плакатсем, тĕрлĕ лозунгсем, Хĕрлĕ хăмасем, фотовитринăсем кĕреççĕ. Çавăнпа та изобразительнăй искусство çуракине хатĕрленсе ирттерес ĕçре паллă вырăн йышăнса тăмалла.

Кружоксен пĕтĕм ĕçне календарла план тăрăх туса пымалла.

Июнĕн 1-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче Чăваш республикинче художествăллă пултарулăхăн смотрĕ пулса иртмелле. Март уйăхĕпе июнĕн 1-мĕшĕ хушшинчи вăхăт смотра ирттерме хатĕрленмелли вăхăт пулса тăрать. Çураки вăхăтĕнче пултарулла ĕçленĕ кружоксем районри смотра хутшăнма тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешмелле. Районсенчи смотрсенче уйрăмах палăрнă кружоксене республикăри смотра килме право параççĕ.

Çавăнпа художествăллă пултарулăх кружокĕсен ĕçне вăйлатмалла, кружоксен ĕçне чĕртсе ямалла, кружоксем çук пулсан, вĕсене çĕнĕрен организацилемелле.

Методикăллă пулăшăва, музыкăпа хор репертуарне, пьесăсене художествăллă пултарулăх кружокĕсем Чăваш республикинчи халăх творчестви çуртĕнчен ыйтса илме пултараççĕ.

Г. ЛИСКОВ,

ЧАССР Искусствин тава тивĕçлĕ деятелĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99. ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

ПТ 1277 Типография № 1. Управления полиграф промышленности при СНК ЧА ССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.